Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

92-93 (7946-7947) №№ ✻ Шăмат кун, 2011 ҫулхи чӳк (ноябрь) уйăхĕн 19-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ватă ҫынна – тимлĕх тата хӳтлĕх

Маттур та тараваt

*Харпăр хăй суйласа илнĕ ĕҫе тулли кăмăлпа пурнăҫлани чуна килентерĕҫ кӳрет, савăк кăмăл парнелет. Ун пек чухне халăхра килтен ĕҫе, ĕҫрен киле каяс килтĕр теççĕ. Уйрăмах ватă тата хевтесĕр ҫыншăн ырă ĕҫ туни вара кирек хăçан та пысăк савăп.*

*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Галина Ивановна Бакина Каршлăхри интернат ҫуртра тăваттăмĕш ҫул медицина ĕҫченĕнче вăй хурать. Медицинăри пĕтĕмĕшле ĕҫ стажĕ вара унăн вăтăр ҫула яхăн.*

*– Эпĕ мĕн ачаллах çак ĕҫе тĕллерĕм. Ҫавăнпах та ĕнтĕ хам пурнăҫа ҫынсене сыватас ĕҫпе ҫыхăнтартăм. Хӳтлĕх, тимлĕх кирлĕ ҫыншăн тăрăшнинчен савăпăраххи мĕн пултăр-ха тата? Ҫынна ырă туни каялла та ырăпах таврăнать теççĕ вĕт халăхра, – терĕ Галина Ивановна хăй ĕçне пурнăҫланă хушăрах.*

Р. ИЛЛАРИОНОВА

сăн ӳкерчĕкĕ.



Пĕрлехи информаци кунĕнчен

## Вырăнта та пуçаруллăрах пулмалла

***Иртнĕ пĕрлехи информаци кунĕнче Чăваш Республикинчи хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсемпе ытти техникăна техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăракан патшалăх инспекцийĕн ертӳçи В.П. Димитриев ертсе пыракан информаци ушкăнĕ пирĕн районти Ярославка, Муркаш, Уйкас Янасал, Чуманкасси, Ярапайкасси ял тăрăхĕсенчи ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕ, пур тĕл пулура та Чăваш Республикин Президенчĕн М.В. Игнатьевăн Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă «Пĕтĕмпех çын валли тата çыншăн» Çырăвĕ тавра пулчĕ калаçу.***

***Çак кун Владимир Павлович район администрацийĕн пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа, «Районти вылăх-чĕрлĕх чирĕпе кĕрешекен станци» патшалăх учрежденийĕн ертӳçипе Н.С. Яковлевапа пĕрле Ярославка ял тăрăхĕнчи ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕ.***

Чи малтанах информушкăн Ниссаксинчи библиотекăра Ярославка ял тăрăхĕн специалисчĕсемпе, культура ĕçченĕсемпе, вырăнти депутатсемпе курнăçрĕ. Кунта сĕт хакĕ чакма пуçланине палăртрĕç, Владимир Павлович калана тăрăх сĕт хакĕ 10 тенкĕрен йӳнелмен. Патшалăх пулăшнипе пĕлтĕрхи калама çук шăрăх çанталăк çынсен сĕтелĕ çинче япăх енчен палăрмарĕ. Патшалăх ял хуçалăх предприятийĕсене кăна мар, уйрăм çынсене те ĕне усраншăн укçа парать. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов çак патшалăх пулăшăвĕ пĕр ĕнене тытса тăма тухса каякан тăкакăн 40 процентне саплаштарнине палăртрĕ. «Муркашри сĕт-çу завочĕ» акционерсен уçă обществи сĕте 1 литре 12 тенкĕ те 50 пуспа йышăнать. Сĕт туса илессипе районăн малашлăхĕ пысăк. Çитес вăхăтра «Путь Ильича» АФ» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра пысăк сĕт-çу комплексĕ хута каймалла. Çак ĕçе йĕркелекен инвестор сĕт-çу завочĕн малашлăхне те аталантарасшăн. Çавăнпа та, Юрий Александрович калашле, вырăнти сĕт пуçтаракан ял хуçалăх потребительсен кооперативне пуçне питĕ вырăнлă пулмалла. «Уркенмелле мар. Ĕçлесен паян ялта пурăнма пулать», – терĕ Юрий Александрович. Çак шухăша нумаях пулмасть республикăра иртнĕ ял хуçалăх ĕçченĕсемпе апат-çимĕç промышленноçĕнче ĕçлекенсен кунне халалланă уява хутшăннă Муркаш районĕн çыннисем те палăртрĕç.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

Ноябрĕн 21-мĕшĕ – Налук ĕçченĕсен кунĕ

## Хăйсен тивĕçне ответлăхпа пурнăçлаççĕ

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн налук органĕсен ĕçченĕсен кунне паллă тăватпăр. Ку вăл налуксемпе тӳлевсене Раççей Федерацийĕн законодательствипе пăхнă вăхăтра тата тулли куçарса парассипе çыхăннă. Налук тӳлевĕсен виçи ӳссе пыни бюджет сферинче вăй хуракансене ĕç укçи, пенсисемпе пособисем вăхăтра тӳлеме, патшалăх экономикине инвестицисем хывассине лайăхлатма, ял хуçалăх производствине аталантарма, ытларах çурт-йĕр, çул-йĕр т. ыт. те тума май парать. Хальхи социаллă программăсене пурнăçласси тата малашлăхри проектсене пурнăçласси вара чи малтанах налук ĕçне-хĕлне çирĕппĕн пурнăçласа пынипе çыхăннă.

Паянхи куна Налук инспекцийĕнче юридици вăйĕнчи 730 организаципе учреждени тата уйрăм предпринимательсен 1784 çын учетра тăраççĕ. 2011 çулхи 10 уйăхра пур йышши шайри бюджетсене 423441 пин тенкĕ пырса кĕнĕ. 2010 çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан ку вăл 122 процентпа танлашать.

Налук органĕн сотрудникĕсем бюджета укçа-тенкĕ хывассине ӳстерес тĕлĕшпе хăйсенчен мĕн килнине пĕтĕмпех тăваççĕ. Налук виçинчен ытларах пайĕ çынсем хăй тĕллĕн тӳленинчен пухăнать. Çапах та налука хăйсем тĕллĕн тӳлессинчен пăрăнакансем те çук мар. Çавăнпа та кун пеккисен налуксемсĕр пуçне пенисемпе штрафсем те тӳлеме тивет.

Çапах та паян налук тӳлекенсемпе çыхăннă хутшăнусем партнерла çыхăнусем тесе калас килет. Налук тӳлекен паян пĕлӳ енĕпе те унчченхи мар. Ку вăл эпир тухса иртерекен ĕçрен те килет. Кусем вĕсем семинарсем, вырăнти хаçатра пичетлесе тăракан материалсем. Пирĕн инспекцире, çавăн пекех Муркашри тата Хĕрлĕ Чутайри территори органĕсенче операци залĕсене уçнă. Вĕсенче налук тӳлекенсем хăйсене интереслентерекен ыйтусене татса пама тата тивĕçлĕ хурав илме пултараççĕ. Кунпа пĕрлех федераллă налук службин управленийĕн сайчĕ çинче те усăллипе кирлине сахал мар пĕлме пулать.

Çавна та палăртса хăвармалла. Налук инспекцийĕпе налук тӳлекенсем хушшинчи çыхăну подразделенийĕсен специалисчĕсем, инспекторĕсем, ертӳçисем хăйсен тивĕçĕсене мĕнле пурнăçланипе, вĕсен професси ăсталăх шайĕ мĕнле пулнипе те çыхăннă. Хальхи вăхăтра инспекцире хăйсен ĕçне пĕлекен специалистсем вăй хураççĕ, вĕсем хăйсен професси тивĕçĕсене пурнăçлама пултараççĕ.

Налук инспекцийĕн мĕн пур ветеранĕсемпе сотрудникĕсене çак уявпа саламлатăп! Хăвăрăн професси проблемисене татса парассипе ăнăçусем пулччăр. Сире тата хăвăрăн çемйĕрсене ырлăх-пурлăх, ăнăçу, çирĕп сывлăх сунатăп.

**А. ВОЛКОВ,**
**федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕн пуçлăхĕ, РФ патшалăх гражданла служба 1-мĕш класлă советникĕ.**

Лару

## Депутатсем канашларĕç

**Ĕнер район администрацийĕн ларусен залĕнче депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ ларăвĕ ĕçлерĕ. Депутатсем районта налук ыйтăвĕсене йĕркелесси, пурлăха Муркаш районĕн харпăрлăхне парасси тата ун харпăрлăхĕнчен илесси пирки сӳтсе яврĕç. Кунпа пĕрлех депутатсем район администрацийĕн структурине улшăнусем кĕртесси, муниципаллă служащисен квалификаци экзаменне ирттерессин положенине çирĕплетесси пирки те ыйтусем сӳтсе явса йышăнусем турĕç.**

**Хамăр инф.**

Социаллă хӳтлĕх пайĕнчен

## «Документсене йышăнма пуçăнтăмăр»

***Чăваш Республикин Президенчĕ 2011 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕнче 45 çул ĕç стажĕ пур арçынсене тата 40 çул ĕç стажĕ пур хĕрарăмсене «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят парасси пирки Указ йышăнăччĕ. Вăл çитес çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕрет. Ноябрĕн 9-мĕшĕнче вара Чăваш Республикин Правительствин ларăвĕнче 40 çул ĕç стажĕ пур хĕрарăмсемпе 45 çул ĕç стажĕ пур арçынсене «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят памалли йĕркепе условисене çирĕплетрĕç. Çак ята тивĕçес тесен мĕнле документсем хатĕрлесе памалли пирки районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н.П. ПЕТРОВА каласа пама кăмăл турĕ:***

– Паянхи куна хĕрарăмсенчен 40 çул тата арçынсенчен 45 çул пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ пулсан «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят пама документсем йышăнма пуçăнтăмăр. Малтанах çавна каласшăн. Указ 2012 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вăя кĕрет. Унччен вăхăт пур. Тивĕçлисенчен пуринчен те кирлĕ документсене йышăнса пĕтерĕпĕр.

«Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят илме тивĕçлине çирĕплетме çак документсене тăратас пулать:

1. Паспорт.
2. Пенси удостоверенийĕ.
3. Обязательнăй пенси страхованийĕн свидетельстви.
4. 3х4 см. калăпăшлă 1 сăн ӳкерчĕк.
5. Ĕç стажне çирĕплетекен документсем çаксем пулса тăраççĕ:

– ĕç кĕнеки;
– колхозникăн ĕç кĕнеки;
– ĕç паракан е патшалăх (муниципаллă) органĕ панă ĕç тапхăрне çирĕплетекен справка;
– çар билечĕ;
– архив учрежденийĕн справки;
– ĕç ветеранĕн ятне илме тивĕçнĕ кун тĕлне вăйра тăракан законодательствипе килĕшӳллĕн тунă ĕç килĕшĕвĕ;
– ĕç стажне çирĕплетессипе саккунлă вăя кĕнĕ суд йышăнăвĕ.

Президент указĕпе килĕшӳллĕн республикипе татах 26712 çыннăн «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят илме, социаллă пулăшу шучĕпе уйăхсерен укçа тӳлевĕ илсе тăма май пулать.

Çырупа паллашатпăр

**Ноябрĕн 15-мĕшĕнче ЧР Президенчĕ М.В. Игнатьев ЧР Патшалăх Канашĕ тата республика халăхĕ ячĕпе «Пĕтĕмпех çын валли тата çыншăн» Çырупа тухрĕ.**

**Паянхи номерте Çыру текстне пичетлетпĕр.**

**Вулакансене унпа паллашнă хыççăн хăйсен шухăшне редакцие çырса пĕлтерме ыйтатпăр.**

Саламлатпăр



Юратнă аппана, йăмăка, ырă кăмăллă мăнака – Вăрманкасси ялĕнче пурăнакан **Зоя Алексеевна НИКИШИНĂНА** юбилей ячĕпе саламлатпăр. Эсĕ çепĕç кăмăллă пулнишĕн, нумай çĕрте ырă сĕнӳ парса пулăшса пынишĕн тав тăватпăр. Ĕмĕрӳ вăрăм, сывлăху çирĕп пултăр. Турри ялан пулăшса тăтăр сана, Зоя!

**Саламлаканĕсем: пиччĕшĕ, йăмăкĕ, шăллĕсем хăйсен çемйисемпе.**



Поздравляем с 75-летием нашего любимого мужа, папу и дедушку **КОЖЕВНИКОВА Михаила Николаевича**, проживающего в селе Моргауши.

Дорогой, любимый папа,
В эти трудные года
Твой совет, твоя поддержка –
Нам нужны как никогда.
Дорогой, любимый дед,
Пусть немного ты и сед,
Но на все наши вопросы
Знаешь ты всегда ответ.
Дорогой, любимый муж,
Много было зимних стуж,
Но любовь и доброта
Выручали нас всегда.

**С поздравлением жена, дети и внуки Александр, Константин, Валерия, Николай и Екатерина.**

Муркашра пурăнакан ырă кăмăллă та тараваt юлташăмăрсене – район терапевчĕпе «Электросервис» ООО ертӳçине – **Эльвира Анатольевнăпа Василий Петрович ФОМИНСЕНЕ** çуралнă кунĕсемпе саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, ăнăçу та юрату сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: Ирăпа Анатолий Беловсем.**

# Пĕтĕмпех çын валли тата çыншăн



**Хисеплĕ депутатсем, хаклă ентешĕмĕрсем!**

Халăх ырлăхĕ — чи аслă саккун. Влаç органĕсен пĕтĕм ĕçĕ-хĕле пĕртен-пĕр çак тĕллеве пăхăнса тăмалла тата должноçри çынсен, мĕн пур шайри влаç органĕсен ĕçченĕсен пирĕн тивĕç çыншăн ĕçлесси пулнине самантлăха та манмалла мар. «Çынна мĕнле виçепе виçен, хăвна та çавăнпах виçĕç». Çак сăмахсен тĕрĕслĕхне пин-пин çул çирĕплетекен халăх ăсĕ çапла вĕрентет, çавăнпа та пирĕн пурин те çак чăнлăха хамăрăн тавра курăмра тĕп вырăна хумалла тата кулленхи пурнăçри девиз евĕр йышăнмалла. Çырăва хатĕрленĕ вăхăтра эпĕ республикăра пурăнакансене хастартарах пулма, хăйсен граждан яваплăхне палăртма, сĕнĕвĕсене пĕлтерме ыйтса чĕнсе каларăм. Сĕнӳ чылай килчĕ, эпĕ çакăнпа пурне те чунтан тав тăватăп.

«АБС ЗЭиМ Автоматизаци» акционерсен обществин тĕп конструкторĕ Юрий Иванович Степанов, сăмах май, эпĕ унта нумаях пулмасть пулса курнăччĕ, чĕнсе каланине йышăнса хăйĕн сĕнĕвĕнче Çыру ятне улăштарса ăна Чăваш Ен халăхне Чĕнсе калани тесе палăртмалли çинчен çырать. Ахăртнех, çакă тĕрĕс те пулĕ. Çитменнине, хисеплĕ парламентарисем, сире кăна мар, республика гражданĕсене те тӳрремĕнех чĕнсе каламалли сăлтав паян нумай.

Пĕрремĕшĕнчен, нумаях пулмасть эпир Чăваш Ен Патшалăх Канашне республика бюджечĕн проектне тăратрăмăр. Йăлана кĕнĕ пекех бюджет социаллă тĕллевлĕ, унти тăкаксен виççĕ тăваттăмĕш пайĕ пирĕн граждансемшĕн чи пĕлтерĕшлĕ ыйтусемпе çыхăннă. Çавăнпа та республика пуçлăхĕ пулнă май çав бюджет обязательствисене пурне те пурнăçласси пĕтĕм яваплăха пĕлтеретĕп.

Иккĕмĕшĕнчен, хальхи лару-тăру суйлав умĕнхи пулнипе палăрса тăрать. Вăл общество пурнăçĕ çине хăйне майлă витĕм кӳрет, апла пулсан граждансен шухăш-кăмăлĕнче те палăрмасăр юлмасть, çавăнпа та ку енĕпе хам мĕн шухăшланине асăнса хăвармасăр пултараймастăп. Суйлав теми суйлавçăшăн яланах йывăр та хĕрӳллĕ тема шутланать, чи пĕлтерĕшли вара — йăлана кĕнĕ пекех унта йӳнĕ популизм та, куç кĕрет ултав та туллиех.

Чылай тупăшакан вăйсен, тавлашакан кандидатсен тĕллевĕ политика пурнăçне йывăрлатса кăтартасси, суйлавçа сехĕрлентересси пулса тăрать. Çавăн пекех экономика статистикине пĕлсех кайман, ăна-кăна питех чухламаннине пула, тен, тата йăнăшнăран та, çăмăллăнах ĕненекен, вăйра тăракан влаçа, ăна суйлав тапхăрĕнче яланах тапăнаççĕ, айăпласа каланă кирек мĕнле сăмаха та çывăха илекен çынсене тăрăшсах пăтраштарма хăтланаççĕ. Анчах та пирĕн халăх кун пирки çапла калать: «Турпас тăвакана мар, пӳрт лартакана платник теççĕ». Шантарсах калама пултаратăп, пуçланă кирек мĕнле ĕçе те эпир вĕçне çитернĕ. Хăшĕ-пĕри пек пулăмсене хитрелетсе кăтартман. Йывăрлăхсене пăхмасăр, пурнăçлама пултарайманнине нихăçан та шантарман, шантармастпăр та. Ку манăн, Президентăн, принциплă позицийĕ шутланать. Çавăнпа та пурсăра та кирек мĕнле информаци илнĕ чухне те тимлĕ тата яваплă пулма ыйтатăп.

**Тĕрĕссипе каласан, пирĕн лару-тăру çирĕп** тата мана, республика ертӳçине, пит темлех пăшăрхантармасть. Чăваш Ен тăрăх тухса çӳрекен йышлă çул çӳрев вăхăтĕнче хам куçпа курни, ĕç коллективĕсемпе тĕл пулни çынсем пуш сăмах çаптарас шухăшлă мар, ĕçлес тĕллевлĕ пулнине çирĕплетеççĕ. Çавăнпа та коллективсем ертӳçĕсемпе пĕрле лайăх кăтарту тăвассишĕн ĕçлекен вырăнта çирĕплĕх те, ыранхи кун шанчăклăхĕ те пур.

Ку кăна та мар, юлашки икĕ çул хушшинче экономикăна кризисран тухма пулăшса хăйсен ĕç вырăнĕнче яваплăха туйса тăрăшнă Чăваш Енри мĕн пур çынна манăн тав тума та сăлтав пур. Эпир республикăн социаллă пурнăçпа экономика кăтартăвĕсене палăрмаллах лайăхлатрăмăр. 2010 çултан пуçласа экономикăн пĕтĕм тĕп кăтартăвĕ енĕпе çирĕп ӳсĕм палăрать.

Эпĕ 2011 çулта экономика аталанăвĕн кризисченхи шайне тухма тĕллев лартнăччĕ. Цифрăсем амбициллĕ пулин те – эпир çакна тума пултартăмăр. Регионти пĕтĕмĕшле продукт калăпăшне 199 миллиард тенке çитерме палăртнăччĕ, чăннипе вăл 200 миллиард тенкĕрен кая мар пулать. Кăçал тĕп капитала хывакан инвестицисен хисепĕ 55 миллиард тенкĕ шайне çитет. Иртнĕ çул тухăçлă пулчĕ: Чăваш Енре промышленноçпа ял хуçалăх производствин индексне Раççейри вăтам кăтартуран пысăкрах шая çитернĕ, ку кăтарту строительствăра та, вак сутуилӳре те пысăкрах, халăхăн укçа-тенкĕн чăн тупăшĕсем те ӳснĕ. Куллен кирлĕ апат-çимĕç хакĕсем ӳсесси те пирĕн патра пĕчĕк шайра. Апат-çимĕç таварĕсен потребитель хакĕсен индексĕ енĕпе Чăваш Республики федерации Атăлçи округĕнчи регионсен хушшинче Чулхула облаçĕпе тата Мари Республикипе пĕрле иккĕмĕш вырăнта тăрать.

Пирĕн çуллĕ рейтинга Пĕтĕм тĕнчери агентствăсем тепĕр хут çирĕплетрĕç, çакă Чăваш Енĕн инвестици илĕртӳлĕхне лайăх хак пани тата ĕçсем чăннипе мĕнлерех пынине палăртни шутланать. Экономика ӳсĕмĕ, патшалăх парăмне тивĕçтерме каякан тăкаксене вырăнлăрах туни, федераци бюджечĕн укçи-тенкине явăçтарни республика бюджетне палăрмаллах лайăхлатма май пачĕç. Эпир çулталăкри тупăшсен калăпăшне – 32,4 процент, тăкаксене вара 42,6 процент ӳстерме пултартăмăр. Çав укçа-тенке çын вăй-хăватне аталантарма уйăртăмăр, мĕншĕн тесен унран хаклăраххи урăх çук.

Промышленноç хăйĕн хăвăртлăхне сыхласа хăварни пире 10 уйăхри кăтартусем енĕпе федерацин Атăлçи округĕнче малта пыракансен йышне кĕме май пачĕ. Экономика ĕçĕ-хĕлĕнчи тирпейлекен производствăсен 12 тĕсĕнчен тăххăрăшĕнче производство индексне ӳстернĕ, ĕç тухăçлăхĕ кунта 20 процент ытларах пысăкланнă. Пурăнмалли çурт-йĕр хута ярас ĕç индексĕ пирĕн çултан-çул Раççейре чи лайăххи. Эпир пурăнмалли çурт-йĕр строительствин хăвăртлăхне сыхласа хăвартăмăр – ку кăтартупа эпир йăлана кĕнĕ пекех Раççейре малти вырăна тăратпăр. Тата çакна палăртас тетĕп: пурăнмалли çурт-йĕрĕн 50 процентне пирĕн ял çĕрĕнче çĕклеççĕ, çакă ял халăхĕ тĕлĕшпе тытса пыракан патшалăх политики ăна пулăшассине тĕп вырăна хунине çирĕплетет, çавна пулах эпир Чăваш Енре пĕр яла та çухатмарăмăр.

Ял хуçалăх отраслĕнче те çĕр ĕçченĕсене тав тума сăлтав пур. Типĕ те шăрăх çанталăклă 2010 çул хыççăн вĕсем тăватă хут ытларах (малтанлăха шута илнĕ виçепе) тыр-пул тата тухăçлăхĕ икĕ хут ытларах ӳснине кура çавăн пекех икĕ хут ытларах çĕр улми ӳстерсе пухса кĕртме пултарчĕç. Хăйсем пăхса ӳстернĕ ял хуçалăх çимĕçĕсемпе халăха хĕл валли çителĕклĕ тивĕçтерчĕç, çав шутра йышлă ярмăрккăсенче те (посредниксемсĕр йĕркеленĕ суту-илӳ ĕçĕ хула çыннисене сакăр миллион тенке яхăн укçа-тенкĕ перекетлеме май панă). Пирĕн çавăн пекех аш-какай тата çăмарта туса илесси, мĕн пур категори хуçалăхсенчи ĕнесен шучĕ те ӳснĕ. Ял хуçалăх производствин хăвăртлăхĕн ӳсĕмĕ енĕпе Чăваш Ен Атăлçи федераци округне кĕрекен регионсен хушшинче пиллĕкмĕш вырăн йышăннă.

Чăваш Ен экономикин лайăх аталанăвĕ тытăмлă йышăнусем тума май пачĕ. Хальхи **Чăваш Ен экономикăна экспортпа чĕр тавар никĕсĕ çинче аталантарнинчен инноваци аталану çине куçармалли стратегие** машинăсем тăвассине, электротехникăпа агропромышленноç комплексĕсене, строительство ĕçне, информаци технологийĕсене, предпринимательлĕх приоритетлă майпа аталантарса пурнăçа кĕртет. Раççей Финанс министерстви пирĕн республикăна çĕршывăн «электрон бюджечĕн» ĕçлетме суйласа илнĕ пилотлă виçĕ регион шутне кĕртни вара эпир бюджет «енчĕкĕпе» пысăк ăсталăхпа ĕçленине тата пирĕн çак сферăри ĕçе пысăк хак панине çирĕплетет.

Манăн политикăри оппонентсем суйлав умĕнхи лару-тăру шайĕнче республикăн патшалăх парăмĕн темине çĕклеççĕ, анчах та яваплăн пĕлтеретĕп: Чăваш Ен хăйĕн парăм обязательствисене парăм шайне ăнăçлăн чакарса пурнăçласа пырать тата чи малтан тӳлемелли социаллă пĕлтерĕшлĕ тӳлевсене вăхăтра та туллин тӳлет, çавна май тата хăй çине социаллă çĕнĕ обязательствăсем те илчĕ. Иртсе пыракан çулта патшалăх парăмне тухăçлăн пурнăçланине пула эпир 76,4 миллион тенкĕ перекетлерĕмĕр. Кăçал эпир тăватă миллиард тенкĕ тавăрса паратпăр, çитес çул вара – пилĕк миллиард тенке яхăн, эпир çакна графикпа килĕшӳллĕн пурнăçлатпăр, кунта нимĕнле иккĕленӳ те пулма пултараймасть.

Хисеплĕ ентешĕмĕрсем!

Сирĕнтен кашнинĕшĕнех ыранхи кун шанчăклăхĕ тата паянхи пурнăç хăтлăхĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çыннăн ĕç пулмалла, ăна тивĕçлĕ шалу тӳлемелле, вăл пурнăçра хăйне хăрушлăхсăр туймалла, тавралăх экологийĕ йĕркеллĕ пулнине пĕлсе тăмалла, сывлăх сыхлавĕ тата вĕренӳ паракан лайăх пахалăхлă пулăшусемпе, культура еткерĕпе усă курма пултармалла. Ăнăçлă çын кăна телейлĕ ашшĕ-амăшĕ тата пархатарлă еткерçĕ пулать, çĕр-шыва аталантармалли чăн вăй пулма пултарать. Унсăрăн унăн пурнăçĕ кулленхи йывăрлăхсене çĕнтерессипе çыхăннă асаплă кун-çула çаврăнать. Мĕн пур влаç органĕсен, пирĕн пурин те, уйрăмах вара республика Президенчĕн тĕп тĕллевĕ – пирĕн граждансен пурнăç пахалăхне лайăхлатасси. Мĕншĕн тесен тĕп вырăнта – çын, тĕп тĕллев те – вăлах. «Çынна пани сая каймасть», - теççĕ.

**Иртнĕ çул ку тĕлĕшпе эпир пĕлтерĕшлĕ темиçе задачăна татса патăмăр.**

Пĕрремĕшĕнчен, **ĕççĕрлĕхе чакарас енĕпе** эпир виçĕ çул тытăмлăн ĕçлерĕмĕр. Çĕнетекен предприятисенче ĕç вырăнĕсене сыхласа хăварма, кадрсене маларах вĕрентсе хатĕрлеме, хăй ĕçне йĕркелесе яма грантсем пама 3 миллиард та 345 миллион тенкĕ уйăртăмăр. Пĕтĕмпе патшалăх пулăшăвĕ памалли 20 ытла çул-йĕре пурнăçланă.

Республикăра пурăнакан кашни виççĕмĕш çын çав пулăшупа усă курнă. Эпир ĕç вырăнĕсене сыхласа хăварма тата 93 пин çынна ĕçрен кăларса ярассине сирме пултартăмăр. Чи кирли – патшалăх пултарулăх вăй-халне харпăр хăй тĕллĕн тӳрре кăларма лайăх майсем туса пачĕ. Предпринимательлĕх ĕçĕ-хĕлне йĕркелесе яма кăмăл тунă кирек мĕнле ĕççĕр çын та каялла тавăрса памалла мар йĕркепе 58,8 пин тенкĕрен пуçласа 500 пин тенкĕ таран пулăшу илме пултарчĕ. Çакнашкал майпа 6542 çын усă курчĕ. Пурнăçланă ĕçсем ĕççĕрлĕх шайне 1,4 процента çити чакарма май пачĕç, республикăра ĕççĕрлĕх шайĕ чакассин хăвăртлăхĕ Раççей Федерацийĕнчи кăтартупа танлаштарсан икĕ хут ӳснĕ.

Пирĕн ĕç рынокĕнчи çивĕчлĕхĕн коэффициенчĕ те палăрмаллах чакрĕ – ĕç шыракан пĕр çын пуçне пушă икĕ вырăна яхăн. Енчен те кризис тапхăрĕнче пĕр вакансие темиçе çын йышăнасшăн пулнă пулсан, халĕ пачах урăхла лару-тăру, икĕ пушă ĕç вырăнне пĕр ĕççĕр çын тивет, рабочи специальноçĕсем валли вара тата та ытларах. Çав хушăрах çакна палăртатăп: эпир техника професси училищисен пурлăхпа техника никĕсне палăрмаллах çирĕплетрĕмĕр. Çавна май халĕ пирĕн граждансем офисра вăй хуракансенчен ытларах укçа-тенкĕ ĕçлесе илме май паракан ĕç специальноçĕсем илме пултараççĕ, çакă вĕсене вĕренӳ çул-йĕрне ăнланса суйласа илмелли майсем туса парать.

**Çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелесси** – Правительствăшăн кăна мар, муниципалитет влаç органĕсемшĕн те чи пĕлтерĕшлĕ тĕллев. Эпир кăçал республикăн инвестици илĕртӳлĕхне ӳстерес енĕпе программа йышăнтăмăр, вăл çĕнĕ производствăсене аталантарассине гарантилеме тивĕç, çав производствăсен вара граждансене ĕç вырăнĕсем йышăнма кăна мар, хăйсен пĕтĕм пултарулăхĕпе пĕлĕвне çемье бюджетне пуянлатма, республика пурнăçне лайăхлатмашкăн ĕçлеме майсем уçаççĕ.

Чăваш Ене 2020 çулччен аталантармалли Стратегире ку енĕпе тĕрлĕ мерăсем палăртса хăварнă. Переченьре – 403 миллиард ытла тенкĕлĕх 95 инвестици проекчĕ. Пĕр çак сфера кăна малтанласа палăртнă тăрăх 35 пин çĕнĕ ĕç вырăнĕ, çав шутра пысăк технологиллĕ производствăсенче 10 пин ытла çĕнĕ ĕç вырăнĕ йĕркелеме май туса парать.

Республика пуçлăхĕ пулнă май хамăн тĕллевĕме предприятисене çĕнĕ саккассем илме май килнĕ таран ытларах пулăшасси, хамăр таварсене тата пулăшу ĕçĕсене Раççей рынокне тухма май туса парасси евĕр куратăп. Çакă пурте республикăри ĕç вырăнĕсене аталантарма та, сыхласа хăварма та пулăшĕ.

**Тивĕçлĕ ĕç укçи çынна** йĕркеллĕ пурнăма, кил-çуртне хăтлăх кӳме тата кăмăл тĕлĕшĕнчен хăйне лайăх туйма пулăшать. Ку енĕпе Чăваш Ен Правительствин политики пулăшу парассине малалла та çирĕппĕн тытса пыма тĕллев лартать. Бюджет сферинче вăй хуракан мĕн пур ĕçченĕн шалăвне эпир 13 процент чухлĕ ӳстертĕмĕр. Раççей Президенчĕ вĕрентекенсене пулăшас тĕлĕшпе лартнă тĕллеве пурнăçласа эпир вĕсен ĕç укçине кăна мар, педагогика персоналĕн – педагог-психологсен, социаллă педагогсен, çавăн пекех шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕсенче ĕçлекен воспитательсен – ĕç укçине те 30 процент чухлĕ ӳстертĕмĕр. Икĕ çулта сывлăх сыхлавĕнче врачсен ĕç укçи сахалтан та 31 процент, вăтам сыпăкри медицина ĕçченĕсен вара – 26,4 процент пысăкланмалла.

Патшалăх бизнеса пулăшас енĕпе пурнăçлакан чылай ĕç, Чăваш Ен территорийĕнче хăйсен çĕнĕ производствисене тата саккасĕсене вырнаçтаракан çĕршыври пысăк корпорацисемпе туслă хутшăнусем йĕркелени экономикăри ĕç укçи шайĕ çине активлă майпа витĕм кӳчĕç.

Ĕç укçи ӳсессин хăвăртлăхĕпе Чăваш Ен федерацин Атăлçи округне кĕрекен регионсен хушшинче кăçал çулталăк тăршшĕпех çиччĕмĕш вырăнта тăрать, ĕç укçин тулли шайĕпе (Мари Эл тата Мордва республикисенчен иртсе) –12-мĕш вырăнта. 6 субъектра кăна халăхăн укçа-тенкĕн чăн тупăшĕсем ӳснине шута илнĕ. Чăваш Ен çак йышра пиллĕкмĕш вырăнта.

Çакна палăртмалла: Чăваш Республикинчи организацисен ĕçченĕсен уйăхри номиналлă çырса хунă вăтам ĕç укçин кал-кал улшăнăвĕ самаях кăтартуллă, 2002 çултан пуçласа вăл 5,9 хут ӳснĕ, ĕçлеме пултаракан халăх валли çирĕплетнĕ пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçе вара – 3,6 хут кăна. Çав хушăрах ĕç укçи шайĕ, отрасльсем тăрăх илес пулсан, палăрмаллах уйрăлса тăрать, анчах та пирĕн ĕç укçи 40 пинрен те иртекен ĕç вырăнĕсен хисепĕ йышланать. Экспертсен хаклавĕ тăрăх 64 пин çын е организацисенче ĕçлекенсен пĕтĕм йышĕн 17 проценчĕ 25 пин тенкĕ ытла ĕç укçи илет.

Çакăн пек факта та палăртатăп. Енчен те çулталăк каярах халăха ĕçпе тивĕçтерекен службăра ĕç шыракансене пĕчĕк шайри – 4,5 пин тенкĕ тӳлекен – ĕç вырăнĕсем сĕннĕ пулсан, халĕ вакансисен рынокĕ палăрмаллах улшăнчĕ: ĕççĕррисене сĕнекен ĕç вырăнĕсен 40 процентĕнчен ытларах пайĕнче 10 пин тенкĕрен пысăкрах ĕç укçи шантараççĕ. Асăннă пушă ĕç вырăнĕсен çуррине уйăхри ĕç укçи – 15 пин тенкĕ. Ку кăтарту вара экономикăри вăтам ĕç укçи шайĕнчен те кăшт пысăкрах. Апла пулсан ытларах тупăш илес тесен вĕренмелле тата пулас профессие тĕплĕн шухăшласа суйласа илмелле.

Ял хуçалăх отраслĕнчи тата вăрман хуçалăхĕнчи ĕç укçи – уйрăм тема. Ăна Раççейри вăтам шая çити ӳстерме пирĕн мĕн кирлине пурне те тумалла.

Ĕç укçи енĕпе пуçтарăннă парăм теми те çивĕч шутланать. Шел те, Чăваш Ен ку ыйтупа федерацин Атăлçи округĕнчи субъектсен хушшинче иккĕмĕш вырăнта тăрать, парăмсен хисепĕ – 106,8 миллион тенкĕ. Анчах та кунта çакна палăртмалла, асăннă парăмсен 95,4 проценчĕ конкурслă производство процесне пуçарнă, урăхла каласан, панкрута тухнă 14 организацин. Тата парăмсен 60 проценчĕ яхăн халь эпир япăх ятпа пĕлекен «САВВА» компанисен ушкăнĕнчи предприятисен. Хальхи вăхăтра Чăваш Республикин Прокуратури тата Чăваш Республикин Росреестр управленийĕ арбитражăн уйăрнă ертӳçисен ĕç-хĕлне тĕрĕслет. Тĕрĕслев вăхăтĕнче вĕсен ĕçĕ-хĕлĕнчи йĕркене пăснă тĕслĕхсене палăртаççĕ тата хăйсене панă полномочисен шайĕнче тивĕçлĕ мерăсем йышăнаççĕ.

Кашни гражданинăн пурнăç шайне палăртакан тепĕр фактор **сывлăх сыхлавĕ паракан пулăшусен пахалăхĕ тата вĕсемпе усă курма лайăх май пулни** шутланать. Асăрхаттаратăп: çав пахалăх граждансен сывлăхĕ çине те витĕм кӳрет çеç мар, республикăри демографи лару-тăрăвне те йĕркелет.

(Малалли 4 стр.)

# Пĕтĕмпех ҫын валли тата ҫыншăн

(Малалли. Пуҫл. 3 стр.)

Пĕр енчен, эпир Чăваш Енре ҫураласлăха ӳстерес тата халăх вилессине чакарас кăтартусемпе Раҫҫейре чи лайăххисенчен пĕри шутланатпăр. Пурнăҫ тăршшĕн виҫи те пирĕн Раҫҫейри кăтартуран пысăкрах тата эпир ăна сахалтан та 70 ҫула ҫитерме тĕллев лартатпăр. Юлашки ҫулсенче республикăра хальхи вăхăтри диагностика тата сиплев центрĕсем 20 яхăн йĕркеленĕ. Халĕ пирĕн граждансем операци тутарма унчченхи пек ҫĕр-шывăн тĕп хулинчи клиникăсене кайса ҫӳремеҫҫĕ, пысăк ăсталăхлă медицина пулăшăвне Чăваш Енрех илеҫҫĕ, ҫакă вĕсене ҫемье бюджетне перекетлеме май парать. Пирĕн инсульта пула вилесси – 35 процент, инфаркта пула – 15 процент, ҫул-йĕр ҫинчи транспорт инкекĕсенче аманнине пула 8 процент чакнă. Шыҫă чирĕсемпе чирлекенсем чĕрĕ юласси 60 процент ӳснĕ. Иккĕмĕш ҫул Сывлăх центрĕсем ĕҫлеҫҫĕ, вĕсем сывă ҫынсен – аслисенне те, ачасенне те – сывлăхне упрама пулăшаҫҫĕ, ҫапла майпа граждансене сывă пурнăҫ йĕрки ҫинчен шухăшлама хистеҫҫĕ.

Тепĕр енчен, пирĕн поликлиникăсенчи черетсене пула йывăрлăх палăрать, мĕншĕн тесен малтанласа йышăнакан врачсем хăш чухне ҫитсех каймаҫҫĕ тата ансăр специалистсем енĕпе те ыйту ҫивĕч тăрать. Ҫавна май пирĕн кадрсем ҫитменнипе ҫыхăннă ыйтăва мĕн пур майпа татса памалла. Граждансем черетсене тата регистратурăра кăна мар, тепĕр чухне врач пӳлĕмĕнче те чунсăрлăхпа тата тӳрккеслĕхпе тĕл пулни палăрать.

Пысăк технологиллĕ медицина пулăшăвĕ сарăлса пыни малтанхи сыпăкри медицина пулăшăвне кая хăварма тивĕҫ мар. Ку тĕлĕшпе сывлăха сыхлас ĕҫе 2 ҫулта модернизацилемелли программа ҫине пысăк шанăҫ хуратпăр. **Ҫак вăхăт хушшинче республикăра 25 медучреждение 4,5 миллиард тенкĕлĕх юсаса лайăхлатмалла, 2 пин ытла единица медицина оборудованийĕ** туянмалла, информаци ҫĕнĕ технологийĕсене ĕҫе кĕртмелле. «Электрон регистратури» урлă врач патне ҫырăнмалли мел пирĕн патра анлă сарăлнă, унпа пĕтĕм республикипе кунне 3 пин ытла пациент усă курать. Ҫапах та эпĕ граждансене врач патне ҫырăнмалли майпа кăна мар, больница сайчĕпе те унти пулăшу пахалăхне витĕм кӳмелли мел пек усă курма сĕнетĕп – сиплев пахалăхĕ ҫинчен хăвăр шухăшăрсене палăртса ҫырăр, сирĕн правăна пăснă тĕслĕхсене пурне те пĕлтерĕр.

Модернизацин пĕлтерĕшлĕ тĕллевĕ ҫавăн пекех медицина пулăшăвĕ памалли стандартсене ĕҫе кĕртесси пулса тăрать. Ҫакă кашни пациентах кирлĕ шайра диагностика тата сиплев пулăшăвĕ илессине гарантилеме кăна мар, ҫавăн пекех тата сиплев тăкакĕсене ӳстерме, граждансене стационарсенче эмелпе тивĕҫтерме, чирлĕ ҫынсене хăйсене эмел тата уйрăм препаратсем туянма сĕнекен тĕслĕхсене пĕтерме пулăшĕ.

Ҫапах та, ман шутпа, модернизацин тĕп тĕллевĕ пӳлĕмсен стенисене юсани тата оборудовани туянни кăна мар, врачпа чирлĕ ҫын хутшăнăвĕсене палăрмаллах улăштарни те пулмалла.

Табак туртассипе, наркоманипе, алкоголизмпа кĕрешес ĕҫре парти тата общество тĕрĕслевĕн пĕлтерĕшне палăртса хăварас тетĕп. Патшалăх политикин сферинче эпир мĕн тумаллине пурне те тăватпăр, ҫапах та общество сиенлĕ ҫак йăласемпе хăй те кирлĕ пек кĕрешмесен эпир чылай ҫамрăк гражданина ҫухатма пултаратпăр, вĕсем вара – Чăваш Ен пуласлăхĕ.

Республика пуласлăхĕ эпир хамăр ачасем ҫине мĕнлерех пăхнинчен тата **вĕренӳ ĕҫĕ-хĕлĕнчен** килет. Асăннă ĕҫ наци вăй-хăвачĕн аталанăвĕ, вăл конкуренци хуҫаланакан хутлăхра пурăнма, наукăпа тачă ҫыхăннă производствăсенче ĕҫлеме хатĕр пулнине витĕм кӳрет. Ҫакăн валли республикăра нумай ĕҫ тунă. Пирĕн ачасенчен 92 проценчĕ ытла хальхи условисенче вĕренет.

Шкул ҫурчĕсене тытăмлăн юсас, шкул компьютерĕсене тата автобус паркне ҫĕнетес, хăрушсăрлăх тытăмне аталантарас ĕҫсене малалла тăсăпăр. Эпир ачасене вĕри апатпа тивĕҫтерес ыйтăва тытăмлăн татса парас тесе тăрăшса ĕҫлерĕмĕр, ҫапах та чи ҫывăх вăхăтрах ачасен апатланăвĕн хальхи вăхăтри индустрине йĕркелемелле. Вăл шкулти апатланăвăн пысăк пахалăхне тата унăн тĕрлĕ енлĕхне тивĕҫтермелле. Шкул инфратытăмне малалла аталантарма муниципалитет районĕсен администрацийĕсен энерги перекетлес, вĕренӳ объекчĕсене юсас енĕпе программăсем туса хатĕрлемелле тата хăйсен сĕнĕвĕсене Чăваш Ен Вĕренӳ тата Финанс министерствисене тăратмалла.

Республикăра ачасене шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕсемпе тивĕҫтерес лару-тăрăва тĕпрен лайăхлатас тĕлĕшпе пурне те тăватпăр. Иртнĕ ҫул валли палăртнă тĕллев те пурнăҫланать. Ҫулталăк ҫурăран пуҫласа 3 ҫула ҫитичченхи ачасем пур, пепкисем ача садне ҫӳремен ҫемьесене укҫа тӳлесе саплаштарас енĕпе пилот проекчĕ пурнăҫланать. Хальхи вăхăтра Шупашкарта, Канашра тата Шупашкар районĕнче ҫав пособие 4 пине яхăн ҫемье илсе тăрать, ҫакă асăннă муниципалитетсенчи ача сачĕ паракан пулăшу кирлĕ ҫынсен 85 проценчĕне танлашать.

Шкулсене юсаса ҫĕнетнĕ шайра 4 пин вырăнлă шкулччензи 235 ушкăн уснă, ҫакă вăтамран **ҫĕнĕ 20 ача сачĕ тăвассипе танлашать.** Кăҫал республикăра юлашки вунă ҫул хушшинче пуҫласа **ҫĕнĕ сакăр ача сачĕ** тума пуҫланă. Ҫитес ҫул тата 3 пине яхăн вырăн йĕркеленет. 2014 ҫул вĕҫне вара 24 ҫĕнĕ ҫурт тата хальк ĕҫлекен ача сачĕсем ҫумне тĕксе 4 ҫурт тума палăртнă. Ҫемье, килти тата уйрăм ҫын тытса тăракан ача сачĕсем тăвассине шута илсен эпир шкулчченхи вĕренӳпе пурте усă курма пултарассипе ҫыхăннă ыйтăва, тĕпрен илсен, татса пама тивĕҫ.

Эпĕ вĕренӳ ĕҫĕн содержанийĕпе ҫыхăннă ҫивĕч ыйту пирки калаҫмастăп. Мĕншĕн тесен республикăра педагогсен самаях креативлă ушкăнĕ ĕҫлет. Эпир нумай ҫĕнĕ пилот проекчĕсене пурнăҫлатпăр, пирĕн пата инҫетрен те вĕренме килеҫҫĕ. Анчах та тепĕр пысăк пĕлтерĕшлĕ ҫивĕч ыйту пур, ун пирки эпĕ маларах, ĕҫсерĕхпе кĕрешесси пирки хускатнă сăмахра асăнтăм. Ку – шкул ачисем хăйсен профессири вырăнне тупасси, экономика валли кадрсем хатĕрлесси, професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисенчен вĕренсе тухакансем республикăри ĕҫ рынокĕнче кирлĕ пулнине ӳстересси. Пирĕн ку енĕпе кирлипе ҫĕнӳ хушшинчи уйрăмлăха 10 процентран ытла мар шая ҫитерме тăрăшмалла (хальлĕхе вăл 55 процента танлашать). Ҫакă професси пĕлĕвĕ паракан шкул темиҫе диплом илекен **выпускниксене** кăна мар, **чăн пĕлӳллĕ тата чăн ăсталăхлă, конкурентлă специалистсене** вĕрентсе хатĕрлемеллине пĕлтерет.

Чăваш Ен Вĕренӳ министерствин вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле никĕс шкулсен, ресурс центрĕсен тата професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисен вăй-хăвачĕпе усă курса профиль инженер класĕсем уҫас тĕлĕшпе хастарлăн ĕҫлемелле. Ҫак енĕпе Чăваш Енри лайăх опыта анлăн сармалла. Эпир вара унчченхи пекех ĕҫ паракансемпе пĕрле республикăри организацисене специалистсене ĕҫе тĕллевлĕн вырнаҫтарас енĕпе тăвакан ĕҫе малалла тăсăпăр.

Вĕренӳ ĕҫĕнчен **граждансен хăрушсăрлăхĕ** ҫине куҫнă май, Ҫĕнĕ Шупашкарта ĕҫлеттерсе пăхнă йĕркесĕр ҫемьесен даннăйĕсен банкĕпе микрорайонăн социаллă карттине тепĕр хут аса илес тетĕп. Мĕншĕн тесен Чăваш Ен Шалти ĕҫсен министерствин ҫул ҫитмен ҫамрăксем тăвакан преступленисен кăтартăвĕ хальлĕхе лайăх шайра мар-ха.

Юлашки ҫулсенче преступленисен шайĕ чакса пынине, вĕсене уҫса парас шайĕ вара 71 процент кăтарту ҫывăхĕнче ҫирĕппĕн тытăнса тăнине пăхмасăрах, граждансен хăрушсăрлăхĕпе ҫыхăннă лару-тăру ҫаплипех пăшăрхантарать. Пирĕн кăтартусем федерацин Атăлҫи округĕнчи тата Раҫҫейри вăтам кăтартуран лайăхрах пулни право йĕркине тивĕҫтерекен тытăмсене лăпланса ларма ирĕк памасть. Граждансен ҫынна тата унăн пурлăхне тапăнасран хӳтĕлекен ĕҫ пахалăхĕпе шайĕ палăрмаллах ӳссесине кĕтме ирĕк пур.

Ҫавăн пекех ҫакна палăртас тетĕп: пурнăҫ пахалăхĕ лайăхланнăран уйрăм ҫынсем тытакан автотранспорт шучĕ пысăкланни ҫул-йĕр ҫинчи транспорт инкекĕсен йышне ӳстерет. Вĕсенче вара водительсем кăна мар, ҫуран ҫӳрекенсем те вилеҫҫĕ, аманаҫҫĕ. Ҫак цифрăсем пирки шухăшласа пăхма ыйтатăп, кăҫал кăна ҫул-йĕр правилине пăснă 310 пин ытла тĕслĕхе тупса палăртнă, руль умне ӳсĕр пуҫпа ларнă тăватă пин ытла ҫынна административлă майпа явап тыттарнă! Патшалăх Думин ҫĕнĕ йышĕн депутачĕсене ҫакăн пек наказ парас килет – ҫул-йĕр правилисене пăснăшăн тыттаракан явапа тата та ҫирĕплетмелле.

Сăмах май, Раҫҫей Федерацийĕн шалти ĕҫсен министрĕ Рашид Гумарович Нургалиев пирĕн республикăна визитпа килни эпир тĕрĕс ҫулпа пынине ҫирĕплетрĕ. Чăваш Енре пурнăҫланакан «Хăрушлăхсăр хула» программа йĕркене пăсакансемпе чи тĕрĕс майпа – ҫулсем ҫине сăнакан камерăсем вырнаҫтарнипе пула пĕтĕмĕшле тĕрĕслев йĕркелесе – тухăҫлăн кĕрешме пулăшать. Эпир тĕп хулана икĕ ҫул хушшинче ҫĕнĕ оборудованипе тивĕҫтерме хамăр ҫине обязательствăсем илтĕмĕр тата пирĕн программăра палăртнă пĕтĕм ĕҫе пурнăҫланатпăр.

Преступлени тăвасси, ĕҫкĕпе иртĕхни тата хулиганлăх чăн малтанах чунсăрлăхпа ҫыхăннă. Ăс-хакăла йĕркелесси вара – кăткăс тата вăрах ĕҫ, унта хутшăнакан та чылай – ҫемье, шкул, культурăпа кану инститчучĕсем. Модернизаци ĕҫне пурнăҫа кĕртнĕ май вĕсен статусĕ ӳсет, вĕсене экономика аталантармалли ресурс, социаллă ҫирĕплĕх факторĕ тата территори имиджĕ пек хаклаҫҫĕ. Пирĕн мĕн пур ял тăрăхĕсенче культура ыйтăвĕсемпе ҫине тăрса ĕҫлемелле, ҫĕр ҫинче пурăнакан мĕн пур халăхăн культура еткерне пропагандăламалли кашни майпах усă курмалла.

Кăҫал пирĕн пата библиотекăсене аталантарассипе ҫыхăннă чăваш опычĕне паллашма пĕтĕм Раҫҫей килчĕ. Информаципе ҫыхăнăвăн ҫĕнĕ хатĕрĕсем аталанса пынине пăхмасăр, библиотекăсем, уйрăмах ялсенче, халăхăн пысăк пайĕшĕн пĕлтерĕшлĕ центрсем пулса тăраҫҫĕ. Пирĕн тĕп тĕллев – халăх **культура ырлăхĕсемпе тата пулăшăвăн мĕн пур тĕсĕпе** ирĕклĕн тата пĕр тан усă курма пултарассине тивĕҫтерме майсем туса парасси.

Культура министерствине отраслĕн Аталану концепцине туса хатĕрлеме хушатăп, унта пурлăх аспектне кăна мар, чăн малтанах, ҫынах чĕлхепе каласан, ҫынна ăс-хакăлпа кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен воспитани памалли пĕтĕм тренда, республика территорийĕнче ĕҫлекен культурăн мĕн пур институчĕн малашлăхри ĕҫне шута илмелле.

Культурăна пулăшассине вăйлатмалла. Анчах та ҫак ĕҫре тăрăшакансем хăйсем те гуманитари программисен пĕлтерĕшне лайăх ăнланаҫҫĕ. Пирĕн музейсенче нумай ачаллă ҫемьесем, инвалидсем, ачасем тата пенсионерсем ятарлă ҫăмăллăхсемпе усă кураҫҫĕ. Кураканпа, вулаканпа хутшăнса ĕҫлемелли ҫĕнĕ майсем аталанаҫҫĕ. Ҫавнашкал «искусствăпа ятран сиплени», енчен те ҫак ĕҫе професси тивĕҫĕпе кăна мар, пĕтĕм чун-чĕререн тусан ăнăҫлăхпа палăрма тивĕҫ.

Патшалăх ăс-хакăл ĕҫне пулăшма пултаракан мĕн пур вырăнта пирĕн пурин те тăрăшса ĕҫлемелле. Паян ачасене телевизор экранĕнчен, вĕҫсĕр-хĕрсĕр Интернетран йăтăнса тухакан япăх витĕмрен хӳтĕлеме питех те йывăр. Ҫавăнпа та наци пуласлăхĕн ăс-хакăл сывлăхне упраса хăварас тесен пирĕн ашшĕ-амăшĕн яваплăхне ӳстермелле.

Ҫыншăн **сывă пурнăҫ йĕркине тытса пыма май пулни те** пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чăваш Ен физкультурăпа спорта аталантарас, спорт шкулĕсен йышĕпе, ҫĕр-шывăри пĕрлештернĕ командăсен членĕсен хисепĕ енĕпе малтисенчен пĕри шутланать. 2010 ҫул пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх эпир физкультурăпа тата спортпа туслă граждансен йышĕпе Раҫҫей Федерацийĕн субъекчĕсен хушшинче виҫҫĕмĕш вырăнта тăратпăр (пирĕн кăтарту 27,9 процент, Раҫҫейри вăтам кăтарту – 18,5 процент). Пирĕн тĕллев – 2020 ҫул тĕлне ку кăтартăва 40 процента ҫитермелле.

Ҫакăн валли эпир майсем йĕркеленĕ: ҫитес ҫул вĕҫнелле республикăн мĕн пур районĕнчех физкультурăпа спорт комплексĕсем ĕҫлеме пуҫлаҫҫĕ. Черетре – футбол уйĕсем тата стадионсем тăвасси, пур пек спорт сооруженийĕсене юсаса ҫĕнетесси. Тата чи кирли – эпир Чăваш Ен тĕп хулинче виҫҫĕрен кая мар ФСК тума тĕллев лартатпăр. Хулара пурăнакансем хăйсемшĕн тата хăйсен ачисемшĕн ҫавăн пек майсене тахҫантанпах кĕтеҫҫĕ ĕнтĕ. «Газпром» АУО ертӳҫисен йышăнăвĕпе тата «Пĕрлĕхлĕ Раҫҫей» политика партийĕ пулăшнипе республикăн тĕп хулинче **7500 ҫын вырнаҫмалăх, икĕ катокла** тата машинăсем лартмалли вырăнлă нумай ĕҫ-хĕллĕ хальхи вăхăтри **Пăр кермене** тума пуҫланă. Проект хакĕ – 1 миллиард та 200 миллион тенкĕ. Ку объекта 2013 ҫулхи Ҫĕнĕ ҫул тата Раштав уявĕсем тĕлне хута ямалла.

**Халăх пурнăҫне лайăхлатас тĕллев республикăн пĕрлештернĕ бюджечĕн укҫитенки шутне ӳстерме хистет.** Ҫавна май патшалăх органĕсен тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ҫакна пурнăҫлама сахалтан та икĕ ĕҫе тивĕҫтермелле, налук тӳлекенсен укҫи-тенкипе тухăҫлă усă курмалла тата республика территорийĕнче бюджет майĕсене ӳстермелли ҫĕнĕ тупăшсем тума хастарлăн пулăшмалла.

Общество финанс тытăмне реформăласинче малтисем пулнă май, эпир Раҫҫейри чи усăмлă финанс тытăмĕн ятне тивĕҫрĕмĕр, бюджет йĕркелемелли программа-тĕллев мелĕсем енĕпе ҫĕнĕ норматив-право никĕсне йышăнтăмăр, вăл вара каярах Раҫҫей Федерацийĕн Бюджет кодексĕн нормисен йышне кĕчĕ. **Эффективлăхăн пĕтĕмĕшле шайĕпе Чăваш Ен Раҫҫей регионĕсен хушшинче малти пилĕк лидер йышĕнче.**

Эпир ҫавăн пекех ҫĕр-шывра пĕрремĕш пулса Чăваш Республикин патшалăх программисене туса хатĕрлесси, пурнăҫласси тата хакласси ҫине ҫĕнĕлле пăхассине ĕҫе кĕртрĕмĕр. Программăсен шайĕнче йĕркеленекен республика бюджечĕн тăкакĕсен танлаштарулла виҫи 74,5 яхăн процентпа танлашнă. Тăкаксене планламалли ҫавнашкал тытăма пирĕн муниципалитет шайĕнче те ĕҫе кĕртмелле тесе шухăшлатăп. Бюджет тăкакĕсен пахалăхĕпе тухăҫлăхне тата та ӳстерес тесен вара пирĕн 2012 ҫултан пуҫласа муниципалитетсенче те виҫĕ ҫуллăх бюджетсем ҫине куҫмалла. Ҫавнашкал тĕплĕн планлани федераци влаҫ органĕсемпе регион влаҫ органĕсем, ҫавăн пекех регионсен муниципалитетсен хушшинчи полномочисене уйăрассине лайăхлатма май парать. Ҫакă бюджетсене шайлаштарас тĕлĕшпе тăвакан ĕҫре ҫав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Эпир хамăрăн тĕп программăн, Чăваш Республикин Социаллă пурнăҫпа экономика аталанăвĕн 2020 ҫулччченхи стратегийĕн, положенийĕсене тепĕр хут пăхса тухса ҫĕнетрĕмĕр. Унăн тĕп тĕллевĕ – экономикăн конкуренци пултарулăхне пысăклатса тата ăна кал-кал аталантарса халăх пурнăҫĕн пахалăхне тата ытлăх-ҫитлĕхне ӳстересси. Ҫĕнетнĕ стратегире инновацисене, нано- тата биотехнологисене хăвăрт аталантарассине, энерги тухăҫлăхне, ресурссене перекетлессине, ҫынна хывакан инвестицисене тĕп вырăна хунă.

**Ҫын капиталне хывакан тухăҫлă технологисен шутне республика граждансене пулăшас енĕпе тăвакан ĕҫе кĕртетĕп.**

Раҫҫей Федерацийĕн Президенчĕ тата Раҫҫей Правительствин Председателĕ Тăван ҫĕр-шыв ырлăхĕшĕн вăрах вăхăт ĕҫленĕ, халĕ унран пулăшу кĕтекен ҫынсене тата паян ачасем пăхса ҫитĕнтерес патшалăх вăй-хăватне ӳстерекенсене – нумай ачаллă тата ҫамрăк ҫемьесене социаллă хӳтлĕх памалли политикăна хастарлăн пурнăҫа кĕртеҫҫĕ.

Юлашки 10 ҫулта ватлăхпа паракан ĕҫ пенсийĕн вăтам виҫи ултă хут ӳсрĕ. Социаллă пенсин вăтам виҫи пенсионера пурăнма кирлĕ республикăра ҫирĕплетнĕ чи пĕчĕк виҫерен пысăкрах. Ҫитес ҫул ĕҫ пенсийĕсене тата 9,6 процент чухлĕ индексацилеҫҫĕ. Чăваш Енре ĕҫлеме пултаракан ӳсĕмрен аслăрах граждансен 80 проценчĕ хушма социаллă пулăшу илсе тăрать. Ҫак тĕллевсем валли республика бюджечĕнчен кăҫал 1 миллиард та 590 миллион тенкĕ уйăрнă, тепĕр ҫул вара – 1 миллиард та 786 миллион тенкĕ (ӳсĕм 12,3 процент). Сăмах май, финанс кризисĕн условийĕсенче тĕнчери пĕр ҫĕр-шыв та пенсионерсене ҫавнашкал пулăшу пама палăртакан йышăнусем туман.

Юпа уйăхĕнче эпир пĕлтерĕшлĕ тепĕр йышăну турăмăр – «Чăваш Республикин ĕҫ ветеранĕ» ята илме право пур граждансен ушкăнĕсен йышне ӳстертĕмĕр. 26 пин пенсионер республика бюджечĕн укҫи-тенки шучĕпе социаллă пулăшу илĕ. Указа пурнăҫланине шута илсен Чăваш Енре пурăнакансен 20 проценчĕ (кашни пиллĕкмĕш ҫын) республика тата федераци бюджечĕсенчен социаллă пулăшу илме пуҫлĕ. Иккĕмĕш тапхăр – ҫав ӳсĕме арҫынсемшĕн 40, хĕрарăмсемшĕн 35 ҫула ҫити чакарасси – республика экономики, урăхла каласан, эпир пурте тухăҫлă ĕҫлесе пырсан чи ҫывăх вăхăтрах пурнăҫа кĕрĕ.

Раҫҫей Президенчĕ Тăван ҫĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсене, вăрçăра вилнĕ тата вилнĕ вăрçă участникĕсен ҫемйисен членĕсене пурăнмалли ҫуртйĕрпе тивĕҫтерес ыйтăва пысăк вырăна хурать. Чăваш Енре 3820 ҫынна пурăнмалли ҫурт-йĕрпе тивĕҫтернĕ ĕнтĕ, ҫитес ҫул ку ыйтăва татса паратпăр. Эпир ҫавăн пекех тăлăх ачасене тата нумай ачаллă ҫемьесене пурăнмалли ҫурт-йĕрпе тивĕҫтерсе курăмлă пулăшу кӳтĕмĕр. Нумай ачаллă ҫемьесене ҫĕр лаптăкĕсемпе тивĕҫтерес ыйтăва эпир Атăлҫи федераци округĕнче пуринчен те активлăрах татса паратпăр.

(Малалли 5 стр.)

# Пĕтĕмпех çын валли тата çыншăн

**(Вĕçĕ. Пуçл. 3, 4, 5 стр.)**

Çакна палăртмалла: ку çул республикăшăн нихçанхинчен те тухăçлă пулчĕ. **Ял хуçалăх производствин 9 уйăхри индексĕ 134,8 процентпа танлашнă** (Раççей Федерацийĕнче — 115,9 процент). Пĕтĕмĕшле продуктăн хаксемпе палăртакан çавнашкал пысăк калăпăшне (хальхи хаксемпе) Чăваш Ен нихăçан та туса илмен. Çавăнпа та эпĕ çĕр ĕçченĕсене ырми-канми ĕçĕсемшен тав тăватăп.

Вырăс-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе тӳрремĕнех витĕм кӳнĕ 2010 çулхи типĕ çанталăк сиенĕсене пĕтерме Раççей Правительстви те халиччен пулман пулăшу кӳчĕ. Тăкаксене бюджет шучĕпе вăтамран 45 процент виçепе саплаштарни – СССР историйĕнче те, хальхи Раççей кун-çулĕнче те пулман. Асăннă пулăшусăр ял хуçалăхĕнчи чылай хуçалăх тытакан субъект çука юлнă пулĕччĕ, çакă вара çынсем ĕç вырăнĕсене йышлăн çухатасси патне илсе пыма пултаратчĕ, ял хуçалăх производствине чĕртсе тăратма чылай вăхăт кирлĕ пулатчĕ.

Юлашки çулсенче Чăваш Енре 100 ытла инноваци объектне – тĕнчери тĕслĕхсемпе тӳр килекен хальхи вăхăтри çĕнĕ производствăсене хута янă. Апла пулин те – ял хуçалăхĕ тирпейлекен ĕçрен пысăкрах хăвăртлăхпа аталанать. Çакна шута илсе эпир çĕнĕ заводсем тăвакан инвесторсен процент ставкисене субсидилес енĕпе хамăр çине обязательствăсем илтĕмĕр. Пирвайхи проектсем хута каяс шайра ĕнтĕ, çавна май эпĕ вĕсен тĕслĕхне кура çак ĕçе хăватлă ытти инвесторсем те хутшăнасса шанатăп.

Ял хуçалăх производствин тĕп тĕллевĕсенчен пĕри — унăн тупăшлăхне ӳстересси. Çакна пурнăçлас тесен чи малтанах экологи тĕлĕшĕнчен таса ял хуçалăх продукцине туса кăларассине йĕркелеме кирли çинчен пĕрре мар каланă ĕнтĕ. Рынокăн çĕнĕ пайне йĕркелессине «Чăваш биопродукчĕ» логотип тунинчен, «Органика» лавккисен тытăмне хута янинчен, çавнашкал апат-çимĕçĕн стандартне ĕçе кĕртнинчен тата вĕсене ирĕклĕ майпа сертификацилессинчен пуçланă. Асăннă таварсене туянасси усни халех палăрать. Чăваш тавар туса кăлараканĕсен продукцийĕ пĕтĕм тĕнчери экологи экспертизи урлă ăнăçлăн иртет.

Тăвата çул хушшинче эпир усă курман 100 пин гектар ытла ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене çаврăнăша кĕртрĕмĕр. Анчах та пирĕн тата çавăн пек 30 пин гектар пур. Пĕлтĕрхи типĕ çанталăк çав çĕрсене çаврăнăша кĕртме май памарĕ. Министрсен Кабинетне вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле çитес çул çак ĕçе пĕтĕмпех вĕçлеме хушатăп.

Ялти çĕр лаптăкĕсене инвестици проекчĕсене пурнăçлама уйăрса парас ĕçе ансатлатасси пĕлтерĕшлĕ çул-йĕр пулса тăмалла. Ку ĕçе пурнăçлама тытăннă ĕнтĕ. Унпа пĕрлех муницилитет тата уйрăм çын харпăрлăхĕнчи çĕр лаптăкĕсемпе спекуляци тăвассипе çыхăннă тĕслĕхсене пĕтермелле. Çавна май Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне граждансем хăйсем тытса тăракан çĕрсене сутас кăмăллă пулнине палăртса чĕнсе каланисене тĕплĕнрех, вырăна тухса тата çав çĕр лаптăкĕсене хак парса пăхса тухма хушатăп. Кирлĕ пулсан инвесторшăн илĕртӳллĕ шутланакан çĕр лаптăкĕсене туянма тата вĕсене Чăваш Республикин харпăрлăхне кĕртме Чăваш Республикин майлăрах туяну правипе усă курмалла.

Бизнеса аталантарасси, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелесси тата ĕç укçине ӳстересси яланах **регионăн инвестици илĕртӳлĕхĕпе** çыхăннă. Пирĕн çакăн валли пĕтĕм норматив-право никĕсне туса хунă, инвестицисене пулăшмалли, административлă чăрмавсене чакармалли программăсем йышăннă, кашни муниципалитет пĕрлĕхĕнчех инвестици проекчĕсене пурнăçлас енĕпе пайăр тĕллевсем палăртнă. Эпир инвестици хăвăртлăхĕсем енĕпе Раççейре малтисенчен пĕри шутланатпăр, 2010 çулта – 122 процент, çав вăхăтрах ку кăтарту Раççейре 106 процент. Эпĕ çак хăвăртлăхсем сыхланса юласса шанатăп.

Инвестицисем килсе кĕрессине ӳстермелли ресурса эпĕ **индустри паркĕсем, кластер майĕпе хăвăрт аталанакан территорисем тата ыт. те туса хурса территорисене аталантармалли** çĕнĕ майсенче куратăп. Кашни муниципалитет пĕрлĕхĕн вăйлăрах енĕсене тупса палăртассине тĕпе хурса республика территорийĕнче экономикăн кал-кал усĕмĕн тăрăхĕсене йĕркелесси инвестици политикине тĕллевлĕн тытса пынипе тата мультипликативлă эффект тăвакан, стратеги характерлă экономика ӳсĕмĕн вырăнĕсене» йĕркелекен экономика сферисене инвестици капиталне хастарлăн явăçтарассипе тачă çыхăннă.

Чăваш Ен **монохуласем енĕпе пурнăçланакан Раççей проектне** ăнăçлăн хутшăнать. Укçа-тенкĕ пулăшăвĕ илмелли перечене лекме хулан тĕплĕн туса хатĕрленĕ инвестицин комплекслă планĕ пулмалла. Çак ĕç пĕртте ансат мар, çапах та эпир ăна пурнăçларăмăр. Пуçарăва Çĕнĕ Шупашкар турĕ, ăна бюджет укçи-тенки шучĕпе 1 миллиард та 482 миллион тенкĕ ытла патшалăх пулăшăвĕ панă, çав шутра 2011 çулта – 1 миллиард та 81 миллион тенкĕ ытла. Кăçал Улатăр хулин инвестицин комплекслă планĕпе палăртнă ĕçсене пурнăçлама бюджет укçи-тенкине 332,3 миллион тенкĕ ытла уйăрнă. Халĕ вара федераци бюджетĕнчен чăн пулăшу илме хаклавăн мĕн пур виçи витĕр тухас тесен Канашра, Çĕмĕрлере, Етĕрнере тата Сĕнтĕрвăрринче пурин те çине тăрса ĕçлемелле. Хăйсен бизнес планĕсене Раççей Правительствинче тата Тулашэкономбанкра çирĕплетес тесен муниципалитетсен хăйсен территорийĕнчи инвесторсемпе тата халăхпа, хăйсен модернизаци программисене пурнăçлама палăртакан предприятисемпе пысăк ĕх туса ирттермелле. Чăваш Енри 6 монохулан инвестици проекчĕсене пурнăçлани 23 пине яхăн ĕç вырăнĕ йĕркелеме, ĕç укçине 35 пин таран устерме май парать. Раççей Федерацийĕн Правительстви монохуласен проекчĕсем валли çулсерен 5 миллиард тенкĕ уйăрма палăртать.

Эпĕ 2012 çулта экономикăна модернизацилес тата диверсификацилес тĕллевпе кашни муниципалитетах хăйĕн инвестицин комплекслă программине туса хатĕрлемелле тата вĕсене туса хатĕрлеме администраци пуçлăхĕсене Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн мĕн пур органĕсем пулăшмалла тесе шухăшлатăп.

Çак ĕç шайĕнче патшалăхпа уйрăм çынсен ĕçтешлĕхне пурнăçа кĕртессине хастарлăн аталантармалла. Ку вăл бизнеспа влаç пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлемелли чи тухăçлă тĕслĕхсенчен пĕри шутланать. Унпа тĕнчери чылай çĕр-шывра ăнăçлă усă кураççĕ. Республикăра, тĕпрен илсен, çакăн валли кирлĕ пек нормативлă право никĕсне туса хатĕрленĕ, политика çирĕплĕхĕ кăна çитсех каймасть. Инвестици проекчĕсемшĕн палăртнă хутшăнусен çавнашкал йĕркипе пысăк проектсенче те, пĕчĕк тата вăтам бизнесра та усă курмалла.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне çавăн пекех обществăшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ шутланакан, социаллă пурнăçа пырса тивекен саккун порекчĕсене тата норматив-право акчĕсене йышăннă чухне вĕсене малтанласа общественноçпа анлăн сӳтсе явассине, проектсен тĕп йĕркисене ăнлантарса парассине тивĕçтерме ыйтатăп.

